24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ДЕКАБРЬ 5 ЭРНЕКУН 287 (6002) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр.

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СТАЛИНЛА КОНСТИТУЦИШĔН, ТĂВАН ÇĔРШЫВШĂН!

Пилĕк çул каялла — 1936 çулти декабрĕн 5-мĕш кунĕнче — Пирĕн Союзри Советсен Чрезвычайнăй VIII-мĕш Съезчĕ Сталинла Конституцие йышăнса çирĕплетрĕ.

Сталинла Конституци — тĕнчери чи демократиллĕ Конституци — пирĕн социализмлă çĕршывăн тĕп законĕ пулса тăрать. Çак закон пире, совет государствинче пурăнакан халăхсене, халиччен тĕнче историйĕ пĕлмен ирĕклĕхсем, этемлĕх курман пысăк правăсем парать. Ĕççыннисене çакăн пек пысăк правăсем паракан конституци халиччен ниçта та, нихăçан та, никĕнле государствăра та пулман. Çавăнпа та эпир Сталинла Конституцие тĕнчери чи демократиллĕ Конституци тетпĕр. Ăна пире халăхсен çулпуçĕ Аслă Сталин туса панă. Ун пек Конституци капитализмлă харпăрлăх йĕркине пĕтернĕ социализмлă государствăра çеç пулма пултарать. Пирĕн çĕршыв — Октябрьти революцире çĕнсе илнĕ социализмлă йĕркен никĕсĕ çинче çирĕпленнĕ государство. Пирĕн çĕршыв — рабочисемпе хресченсен çирĕп союзĕ çинче тытăнса тăракан, ĕççыннисем хăйсем тытса тăракан государство. Çак государство мĕнпур испытанисем витĕр тухса тĕрекленсе пырать. Çак государствăра çынна çын пусмăрлас йĕркене тахçанах пăрахăç тунă, савăнпа пĕрлех ĕçсĕрлĕхе те пĕтернĕ. Çакна пула пирĕн çĕршыври кашни ĕççынни тулли правăллă гражданин пулса тăрать, кашни ĕççынни хăйне тивĕçлĕ ирĕклĕхсемпе усă курать.

Сталинла Конституци кашни совет гражданинне ĕçлеме, канма, вĕренме, ватăлсан е инвалид пулсан государствăран пулăшу илсе тăма правăсем парать. Вăл правăсем çинчен Сталинла Конституцире ылттăн саспаллисемпе çырса хунă.

Пирĕн суйлавсен системине малалла демократизацилесе, Сталинла Конституци суйлавсене пурте пĕр тан хутшăнса хупă майсемпе сасăламалли йĕрке туса пачĕ. Çакăн пек чăн-чăн демократиллĕ суйлавсем пурнăçа çирĕппĕн кĕрсе пынине эпир Верховный Советсен суйлавĕсене ирттернĕ чух аван куртăмăр.

Сталинла Конституци пирĕн нумай наций аслă çĕршывра халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетсе, вĕсене ĕмĕрех пĕр-пĕринпе тăванлăн килĕштерсе пурăнмалли майсем туса пачĕ. Ленин—Сталин партийĕ организацилеме Октябрьти аслă революцие пула ирĕке тухнă халăхсем ,Сталинла Конституци çуттипе хавасланса ĕçлесе, юлашки çулсем хушшинче хăйсен пурнăçне малалла тĕреклетсе пычĕç, вĕсем хăйсен хуçалăхне те ,культурине те нихăçанхи пек мар вăйлатса пычĕç. Чăваш халăхĕ те, ĕлĕкхи патша Российинче чухлăхлăхпа тĕттĕмлĕхре пĕтсе пынă халăх, хăвăрт çĕкленсе телейлĕ, культурăллă халăх пулса тăчĕ. Сталинла Конституци тăрăх пирĕн çĕршыври пур халăхсем те пĕр хисепре, пĕртан шутланса тăраççĕ.

Сталинла Конституци Совет Союзĕн кашни çыннинех обществăллă ĕçсене тата государство ĕçĕсене активлăн хутшăнса ĕçлеме ирĕк парать, çакăнпа пĕрлех Конституци кашни çыннах хăйĕн творчествăллă талантне мĕнпур вăйĕ çитнĕ таран сарма пулăшать. Çак ирĕклĕхсемпе правăсене панипе пĕрлех Сталинла Конституци кашни совет гражданиннех хăйĕн тăван çĕршывне чĕререн юратса тăма, ирĕклĕ çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ пулма хушать. Çак патриотăн совет законĕсене пурнăçа кĕртсе пымалла, ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, государствăпа общество умĕнчи тивĕçлĕхсене тӳрĕ кăмăллпа ĕçе кĕртсе пымалла, социализмлă общежитин правилисене хисеплемелле, социализмлă пурлăха сыхламалла. Анчах пуринчен те хакли вăл — тăван çĕршыва сыхлассишĕн пĕтĕм пурнăçа хума та хатĕр пуласси. Кашни Совет гражданинĕ хăйĕн тăван государствине тăшмансенчен сыхлăса тăмалла, — çакă вăл тасаран та таса тивĕç пулса тăрать.

Сталинла Конституци паракан ,правăсемпе ирĕксем вĕсем — эпир Октябрьти Аслă Революцире çĕнсе илнĕ çитĕнӳсем. Вăл правăсемпе эпир Октябрьти революци хыççăнхи çулсенчех усă курма пуçланă. Анчах та Сталинла Конституци, çав правăсемпе ирĕклĕхсене государствăн тĕп законне кĕртсе, вĕсене пĕтĕм тĕнче умне кăларса тăратрĕ. Ун çинчен Сталин юлташ Советсен VIII-мĕш Съезденче :«...Çĕнĕ Конституци вăл пирĕн иртсе тухнă çулăн итогĕ, халиччен çĕнсе илнĕ çитĕнӳсен итогĕ пулать», терĕ. Çак Конституцишĕн совет халăхĕ Октябрьти революцине граждан вăрçи çулĕсенче нумай юн тăкнă. Октябрь хыççăнхи мирлĕ строительство çулĕсенче нумай ĕçленĕ, нумай кĕрешнĕ.

«...Кĕрешӳпе йывăрлăхсене тӳссе ирттернĕ хыççăн хамăрăн çĕнтерӳсем çинчен калакан Конституцие курма кăмăллă та савăнăçлă. Пирĕн çынсем мĕнтĕн çапăçнине тата вĕсем пĕтĕм тĕнче историйĕтĕн паллă çĕнтерӳсем тунине пĕлсе тăма кăмăллă та савăнăçлă. Пирĕн çынсем нумай тăкнă юн ахаль çухалманнине, вăл хăйĕн çи мĕçне кӳнине пĕлме кăмăллă та савăнăçлă», тенĕ Сталин юлташ Советсен VIII-мĕш Съездĕнче.

Çапла ĕнтĕ хамăра пысăк правăсемпе ирĕклĕхсем паракан Сталинла Конституци совет халăхĕмĕн йӳне ларман. Уншăн эпир юн та тăкнă, нумай кĕрешнĕ, нумай йывăрлăхсене тӳснĕ. Çавăнпа та хамăран куç шăрçине сыхласа упранă пекех сыхласа тăмалла пирĕн çакă ылттăнран та хаклă тăван Конституцие.

Ирĕккĕн савăнса ĕçлеттĕмĕр эпир хамăран тăван Конституцин хӳттинче. Ирĕклĕ, хаваслă ĕç пыратчĕ социализмлă çĕршывăн мирлĕ хулисемпе ялĕсенче. Çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем, пысăкран пысăк çĕнтерӳсем туса пыратчĕ нумай миллионлă совет халăхĕ хăйĕн Сталинла Конституцийĕн хĕвел пек ăшăтакан суттинче. Анчах та пирĕн мирлĕ ĕçе сасартăк тискер тăшман, гитлерла Германин усал вăрă-хурахĕсем килсе татрĕç. Германин бандитла империалисчĕсем пирĕн çине тапăнса, пире ирĕксĕрех вăрçа хутшăнтарчĕç. Сталинла Конституцин 5-мĕш çулти уявне эпир пĕтĕм совет халăхĕмĕн йывăр кунсенче, вăрçă пынă вăхăтра çĕтсе илетпĕр.

Вăйлă та хăрушă тăшман пирĕн аслă çĕршыва тапăнса кĕнĕ фашистсене пĕр сын юлмиччен пĕтерсе тăкма чĕнчĕ. Совет патриочĕсем çак чĕнĕве илтрĕç. Хамăр ирĕклĕхшĕн, хамăр кунçулшăн пыракан отечественнăй вăрçа пĕтĕм совет халăхĕ хутшăнать. Миллионшар рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем çĕршыва ирĕке кăларассишĕн чунне парса ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Çар фронтран çапса аркатнипе, партизансен отрячĕсем тылран çĕмĕрнипе ирсĕр тăшман халран кайса ӳкĕ. Гитлер çарĕсене пĕр салтах юлмиччен хамăр çĕршывран шăлса ывăтăпăр. Ун чух вара фашистла çĕлен-халтасенчен хăтăлнă совет халăхĕ хăйĕн Сталинла Конституцийĕн çитес праçникĕсене каллех ирĕклĕ те мирлĕ кунсенче ирттерсе хавасланĕ.

Анчах та, ултавлă тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас тесен, пирĕн татах та пикенерех ĕçлемелле, мĕнпур вăя, мĕнпур пултарулăха хамăран паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе хумалла. Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйран пулăшасси— пирĕн кашни совет гражданинĕн пысăк тивĕçĕ пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

Декабрĕн 2-мĕшĕнче нимĕçсенне 58 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 17 самолет пĕтнĕ.

* * *

Декабрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен 154 танкне, войскăсем ларса пыракан тата грузсем тиенĕ 1.114 автомашинине, 50 полевой тата зенитнăй орудине, горючи тултарнă 15 автоцистернине, грузсем тиенĕ 254 лавне пĕтерсе тăкнă тата стройран кăларнă, тăшманăн пехотине нумай вĕлерсе пĕтернĕ, сапаласа янă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче Гехман юлташăн часĕсем юлашки вăхăтри çапăçура нимĕçсенне 9 танк, 3 бронемашина пĕтерсе тăкнă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене нумай вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Бондарев юлташăн часĕсем 10 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 20 оруди, 27 пулемет, темиçе миномет, автоматсем тата танксене хирĕç пемелли орудисем нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сергеев тата Алексеенко юлташсен подразделенийĕсенчи боецсем, Кăнтăр фронтĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекенскерсем, пĕр кун хушшинче нимĕçсенне 28 танк, 41 автомашина, 21 оруди, 14 пулемет, 400 противотанковăй мина тата ытти нумай тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ.

* * *

Крымри партизансем икĕ кун хушшинче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăнне 11 грузовой машина, 4 станковăй пулемет тата горючи тултарнă 3 автоцистернăна пĕтерсе тăкнă. Снайпер-партизансем Крымра ăнăçлăн кĕрешеççĕ. 10 кун хушшинче снайперсем нимĕçсен 312 салтакне тата 39 офицерне пĕтерсе тăкнă. Тула облаçĕн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенче кĕрешекен партизансем тул çутăлас умĕн противникăн утлă обозĕ çине пырса тапăннă. Пуçланса кайнă тытăçура нимĕçсен 22 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ, фашистсем хăйсем оккупациленĕ ялсене çаратса тухнă продовольствипе ăшă тумтирсем тиртăрса пыракан 17 лава пĕтерсе тăкнă. Смоленск облаçĕнчи партизансем нимĕçсен ирĕксĕрех çĕр çине анса ларнă транспорт самолетне çунтарса янă, самолетăн экипажне тата фашистсен 3 офицерне пĕтерсе тăкнă, вĕсенчен пĕри полковник пулнă.

* * *

СССР оборонин фондне ĕççыннисем укçа-тенкĕпе продовольстви тата ытти хаклă япаласем татти-сыпписĕр хывăççĕ. Декабрĕн 1-мĕш тĕлне оборона фондне укçан 916,9 миллион тенкĕ, государство заемĕн облигацийĕсене 1.294.395 пин тенкĕлĕх, платина, ылттăн, кĕмĕл, хаклă йышши япаласем тата ютçĕршыв валюти нумай хывнă. Декабрĕн 1-мĕш тĕлне Мускав хулинчи госбанк конторин отделенийĕсене тата тĕп кассине Мускав хулинчи ĕççыннисем укçан 98.628 пин тенкĕ хывнă. Кунсăр пуçне, Мускав çыннисем оборона фондне ылттăн укçа 5.527 тенкĕлĕх панă, 2 килограмм та 215 грамм платина, 7 килограмм та 862 грамм ылттăн, 393 килограмм та 486 грамм кĕмĕл тата ытти хаклă япаласем панă. Колхозниксем оборона фондне тĕттирă, аш-какай, пахча-çимĕçсем, çăм, пир-авăрсем, сĕт-çу продукчĕсем нумай хывăççĕ. Алтай крайĕнчи Смоленски районри «Буревестник» ялхуçалăх артель колхозникĕсем оборона фондне 120 пăт аш-какай, 2.400 пăт тырă панă. «Память Чкалова» колхоз оборона фондне 1.800 пăт тырă хывнă. Киров ячĕпе тăракан, Советсен 7-мĕш съезчĕн ячĕпе тăракан, Сталин ячĕпе тăракан, Куйбышев ячĕпе тăракан колхозсем оборона фондне 7.950 пăт тĕттирă панă.

Декабрĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен Полозков юлташăн часĕ И. ялĕмĕн пынă çапăçура нимĕçсен 10 танкне тата 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Свиридов юлташăн боецĕсем, Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекенскерсем, противника хирĕç çапăçса, нимĕçсен 4 орудине, 2 минометне, 2 пулеметне пĕтерсе тăкнă, 5 ДЗОТ-а çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

2-мĕш рангри воентехник Феоктистов юлташ, Фастич тата Приведенцев саперсемпе пĕрле, противник вырнаçса тăнă çĕре кĕрсе кайнă та тăшман йывăçпа çĕртен тунă пысăк огневой точкăна унти орудипе тата гарнизонĕпе пĕрлех взрыв туса сирпĕтсе янă. Саперсен тепĕр группи нимĕçсем хурса тухнă 80 противотанковăй мина пуçтарса илнĕ те вĕсене хăйсен часĕ вырнаçса тăнă çĕре илсе пынă.

* * *

Нимĕç оккупантĕсем хăйсем тытса илнĕ районсенче пурăнакан халăха тискеррĕн асаплантараççĕ. Смоленск облаçĕнчи Скачково ялĕнче нимĕçсем хресченсенчен мĕнпур выльăх-чĕрлĕхе, тырпула, тăхăнмалли япаласене пĕтĕмпех туртса илнĕ. Çапла çаратнине тата алхаснине хирĕç тăма пăхнă хĕрарăмсене фашистсем ачисемпе пĕрлех пеосе пăрахаççĕ. Оккупациленĕ районсенчен пирĕн чассем вырнаçса тăнă çĕре килнĕ колхозниксем Васенков, Шляхтенко тата Величанский юлташсем çапла каласа параççĕ: «Присельская станцинче нимĕçсем хресченсене валли концентрацилле лагерь тунă. Фашистсем унта стариксене, подростоксене тата 12 çулхи ачасене те хăваласа пухнă. Лагере хупнисене пурне те тăлăкра 14-шар сехет тата ытларах та ĕçлеттереççĕ». Çав лагерьте 360 колхозника пĕрле пулнă Алексей Величанский çапла каласа парать: «Çанталăк сивĕ тăрать пулин те, хресченсем пурте пралук карта ăшĕнче усă пĕлĕт айĕнчех çĕр ка,аççĕ. Арестленисене вараланчăк, тăварсăр апат çитереççĕ, ăна та пулин тутăхса кайнă банкăсене ярса параççĕ. 12 кун хушшинче колхозниксем çăкăр пĕрре те ямĕн. Ĕçрен кăшт пăрăнăшăнах çыннене перепере вĕлереççĕ». Смоленск патĕнчи лагере хупнисене фашистла ирсĕрсем ытлах та тискеррĕн асаплантараççĕ. Çав лагерьте сивве тата выслăха пула кашни кунах нумай колхозниксем, колхозницăсем тата вĕсен ачисем вилеççĕ.

* * *

Югославири партизансем фашистла оккупантсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешсе пыраççĕ. Нумаях та пулмасть нимĕçсемпе итальянецсен войскисем партизансен аллинчи Рудник хулли çине тапăннă пулнă. Хаярран çапăçнă хыççăн фашистсен йĕркерен тухса трĕксĕрех чакмалла пулнă, вĕсен çав çапăçура 600 çын ытла вилсе тата аманса юлнă. Партизансем пулеметсемпе винтовкăсем, гранатăсем тата ытти хĕçпăшалсем тытса илнĕ. Ноябрь уйăхĕ вĕçĕнче Иошаница ялĕ сывăхĕнче партизансемпе штурмовиксен отрячĕ хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Фашистсен банди паникăна кĕрсе ӳксе тарма тытăннă. Çапăçу хирĕнче штурмовиксен 85 вилли тата нумай хĕçпăшал выртса юлнă.

* * *

Нормăна темиçе хут ирттерсе тултаракан стахановецсен речĕсем кашни уйăхрах ӳссе пыраççĕ. Баку хулинчи Майăн 1-мĕш ячĕпе тăракан заводри çамрăк токарь Ага Кулиев юлташ, ответлă çĕнĕ деталь тума вĕренсе, нормăна 300—375 процент тултарса ĕçленĕ. Кайран вăл пĕр вăхăтрах икĕ станокпа ĕçлесе нормăна 700—750 процент тултарса пыма тытăннă. 17 çулти Мария Колесникова, Хĕрлĕ Çара мобилизациленĕ нефтяникăн хĕрĕ, токарь профессине вĕренсе алла илнĕ, нормăна 315—320 процент тултарать. Кулиев тата Колесникова юлташсем ĕçлекен цехра кашни станочникăн ĕç тухăçлăхĕ, сентябрĕнчипе танлаштарсан, вăтамран икĕ хут ӳснĕ. Кузьмов, Соломин, Мирзоев, Яшин, Кантеев тата ытти токарьсем хăйсен нормисене 4—5 хут ирттерсе тултараççĕ. Челябинскри трактор заводĕнче фронта кайнă арçынсем вырăнне тăнă çĕршер хĕрарăмсем двухсотницăсем тата трехсотницăсем пулса тăнă. Механически цехри стахановка Анна Филимонова тăтăшах 2,5 норма туса ĕçлет, токарь Федосия Баннова—3 норма, сверловщица Ульяна Зырянова тата нарезчица Дарья Сазонова—3 норма ытла тăвать.

Конституци кунĕ ячĕпе— пысăк парнесем

ÇĔМĔРЛЕ, (**хамăр корр., телефонпа**). Районри ĕççыннисем Сталинла Конституци кунне фронта пулăшас ĕçе татах та ытларах вăйлатнипе паллă тăваççĕ.

Паянхи кун тĕлне чылай колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене ытлашшипех тултарнă. 20 колхозра заем укçине парса татнă. Рабочисемпе колхозниксем тата служащисем тăван çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне оборона фондне пĕтĕм районĕпе 258 пин тенкĕ укçан, 155 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă, кунсăр пуçне, ялхуçалăх продукчĕсем нумай панă.

«Красноармеец» колхоз членĕсем — 39,7 центнер ыраш, 70 килограмм йĕтĕн сӳсĕ, Пренетри «Большевик» колхоз членĕсем — 312 литр сĕт, Тукаси «Заря» колхоз—498 çăмарта, Турханти «Комбинат» колхоз — 240 килограмм аш-какай, 8 килограмм çăм, 17 центнер тырă, Ленин ячĕпе тăракан колхоз—1.127 килограмм аш-какай панă.

Паян тата ыран предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче Сталинла Конституци çинчен агитаторсем калаçусемпе докладсем ирттереççĕ.

Предприятисенчи рабочисемпе работницăсем Конституци кунĕ ячĕпе сталинла вахтăсене тăраççĕ.

* * *

СĔНТĔР, декабрĕн 4-мĕш. (**Хамăр корр. Телефонпа**). Районра малта пыракан колхозсем Сталинла Конституци кунне аван çапса пĕтернипе, государство умĕнчи парăмсене парса татнипе паллă тăваççĕ. Декабрĕн 1-мĕш тĕлне «Париж Коммуни», «Наука», «Финанс», «Осоавиахим» колхозсем аван çапса пĕтерчĕç. Конституци кунне паллă тума хатĕрленнĕ май, 16 колхозра государствăна тĕштырă парса татнă.

Мăн Хураçка, Шомик тата Янăм ялсовечĕсем государствăна аш-какай тăратмалли плана тултарас тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. Юлашки вунăкунлăхра пĕр Çатракасси ялсовечĕ кăна 11.295 тенкĕ укçа-тенкĕ пухнă. Кăпас, Юваново ялсовечĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана 90-шар процент тултарнă.

Юнта, Пушкăрт, Оринино, Кăпас ялсовечĕсем Сталинла Конституци кунне заем укçине пухса çитернипе кĕтсе илчĕç. Районĕпе ялсен, вуншĕр ялсоветра заем укçисене йăлтах парса татнă.

Янăмри «Дружба», Çармăскассинчи «Дуб» промартельсем оборона заказĕсене срокчен пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Конституци кунне кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту татах та вăйланчĕ. «Дружба» артельри Шунеев, Ямышев, «Дуб» артельри В. Хлебков, Г. Хлебков тата Тимофеев юлташсем хăйсен нормисене 150—200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕнче

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ, ĕççыннисем ыйтнипе килĕшсе, СССР Конституци кунне (декабрĕн 5-мĕшне) уявламалла мар тунă, 1941 çулти декабрĕн 5-мĕшне ĕçлемелли кун тума йышăннă.

Польша республикин премьер-министрне генерал В. Сикорские И. В. Сталин юлташ йышăнни

Декабрĕн 3-мĕшĕнче каçхине Кремльре СССР Совнаркомĕн Председателĕ, Оборона Халăх Комиссарĕ **И. В. Сталин** юлташ Польша республикин министрсен Совечĕн Председательне тата Польшăн хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующине генерал В. Сикорские йышăннă. Йышăнура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов** юлташ пулнă. Генерал Сикорскипе пĕрле Польша республикин посолĕ г. Кот тата Польшăн СССР территорийĕнчи çарĕн командующийĕ генерал **Андерс** пулнă.

Калаçу икĕ сехет ытла пынă.

Таганрог патĕнчи çапăçусем

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, декабрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Пирĕн чассем каялла чакакан противника хăваласа пыраççĕ. Ростовран Таганрога пыракан çул çинче Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем нумай трофейăсем тытса илнĕ. Противникăн чĕрĕ вăйĕ çавтери нумай пĕтет. Сведенисем тăрăх, Козлов юлташ командир пулса ертсе пыракан группа кăна фашистсенне 5000 çын таран вĕлернĕ тата аманнă. Паян çапăçу Таганрог хули патĕнче пулса пынă. Противник вăйлăн хирĕç тăрать. Каялла чакнă чухне вăл авиацине тата автоматчиксен ушкăнĕсемпе хӳтĕленсе пырать, кашни тикĕс мар вырăнтах, сăмахран, Миус юханшывĕ тăрăхĕнчи вырăнсенче, тытăнса тăма тăрăшать.

В. ХОДАКОВ.

Хамăран Сталинла Конституцие, Тăван çĕршыва хŭтĕлесе хăварар!

Сталинла Конституци кунне ялхуçалăх çулне вĕçленипе кĕтсе илчĕç

Пилĕк çул каярах Советсен Пĕтĕм Союзри VIII-мĕш Чрезвычайнăй Съезчĕ çĕнĕ Конституци çирĕплетрĕ. Çак Конституцие халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ хăй тŭррĕмĕнех хутшăнса вĕçленипе туса хатĕрленĕ. Çавăнпа халăх ăна Сталинла Конституци тесе калать. Сталинла Конституцире социализм çĕнтерсе илнĕ аслă çĕнтевçусене çырса хунă. Сталинла Конституци тăрăх Совет Союзĕнчи вĕçсыннисене суйлав, вĕçлев, вĕренŭ, кану тата ытти правăсем панă.

Халăхăн аслă прависене, юнпа çĕнсе илнĕ правăсене, туртса илессишĕн гитлеола чăрă-хурахсем пирĕн аслă çĕршыва сĕмсĕрленсе кĕчĕç. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар тата пĕтĕм совет халăхĕ Германи империалисчĕсене хирĕç геройла кĕрешет. Колхозсем тата колхозниксем фронта, çĕршыва тырпул, аш-какай, сĕт-çу тата ытти продуктсем парса пулăшаççĕ.

Паян декабрĕн 5-мĕшĕ—Сталинла Конституци кунĕ—пĕтĕм халăхăн праçникĕ. Çак уява колхозсем ялхуçалăх çулне вĕçленипе, государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене тултарнипе, çавнашкалах фронта пулăшас ĕçе тата тата ытларах вăйлатнипе кĕтсе илчĕç.

Ишлей районĕнчи «Эстафета» колхоз членĕсем Сталинла Конституци кунне ялхуçалăх çулне вĕçленипе, кăçал пĕлтĕрхинчен пысăкрах тухăçлă тырпул туса илнипе кĕтсе илчĕç. Кашни колхозник хăйĕн обязанноçĕсене пĕлсе, ĕç дисциплинине çирĕп тытса пычĕ. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнаранпа обществăллă харпăрлăха тата тата лайăхрах упраса пычĕç.

«Эстафета» колхоз членĕсем, октябрь уйăхĕнче çуртрисене çапса пĕтерсе, государство умĕнчи çĕрулми тата пахча-çимĕç обязательствисене срокчен тултарнă.

Сталин юлташ Мускав Советĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклад колхозниксемпе колхозницăсене татах та ытларах хавхалантарчĕ. Çулпуç докладне сŭтсе-явнă хыççăн колхозниксем ĕçе пурте кар тухса, çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлеме тытăнчĕç. Вунпĕр кун хушшинче пур культурăсем тăрăх та ăван çапса лĕтĕрчĕç. Каспова колхозницăн упăшки Хĕрлĕ Çарта тăван çĕршыва хŭтленĕ çĕрте çапăçнă вăхăтра вăл колхозра пĕр ĕçрен юлмасăр лайăх ĕçлерĕ. Çавăн пекех ытти нумай колхозницăсем те хăйсен фронта кайнă мăшăрĕсем вырăнне ĕçе тăчĕç.

Колхозниксем ăван çапнă çĕрте тата ытти ĕçсенче те ывăнма пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлерĕç. А. Никитин колхозник сакăр кун хушши кăнтăрла ăван çапнă, кăçхине улăм ури купаланă. Çапла ĕçленипе колхоз кĕске срокрах ăван çапса пĕтерчĕ, государство умĕнчи тарăмсене йăлтах парса татрĕ.

Халĕ ялхуçалăх çулне вĕçленĕ хыççăн колхоз тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама хатĕрленме тытăнчĕ. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, кашни ĕçкунĕ çине 4 килограмм тĕштырă тивет. В. Соловьев, В. Орлов тата ытти колхозниксен çемьисем 150—160-шар пăт тĕштырă илеççĕ.

Ăван çапса пĕтернĕ хыççăн кашни культурăна лайăх сортласа тасатса, вăрлăх фончĕсем хывса çитернĕ. Хальхи вăхăтра колхозниксем вăрманта ĕçлеççĕ, фермăсем валли утă-улăм турттараççĕ, çуракине хатĕрленме тытăннă.

Çапла «Эстафета» колхоз Сталинла Конституци кунне ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленипе кĕтсе илчĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

ÇАПĂÇĂВА! ÇАПĂÇĂВА!

Ансăртран тапăнчĕ тăлман
Пирĕн тăван çĕршыв çине.
Киревсĕр Гитлер çырлахман
Иккен, ĕçсе этем юнне.

Таптаснăн юнлă аттипе
Вăл пирĕн аслă çĕршыва
Çĕклен, çĕршывăм, талккишпе.
Çапăçăва! Çапăçăва!

Пирĕн ĕвеллĕ хуласем,
Ешĕл ялсем кирлĕ ăна.
Садсем, ылттăн тырпулăсем
Çинчен вăл, ирсĕр, хапсăнать.

Вăл пирĕн ирĕк çынсене
Чуралатма ĕмĕт тăвать.
Чĕр вилĕм — юнĕçсенсене!
Çапăçăва! Çапăçăва!

Вăр-хурахла килет тăшман
Туртса илме те çаратма.
Хĕссем-ха пирĕн тутăхман
Тăшман пуçне касса татма.

Чăтаймĕç вăйлă алăсем!
Иксĕлмĕ пирĕн вăйхăват,
Çĕкленĕр ирĕк халăхсем
Çапăçăва! Çапăçăва!

Аçта фашист—унта асап,
Унта куççулĕ, вилĕм, юн.
Вăл урнă кашкăрла асать,
Емĕр ыйханлă ĕçĕ ун.

Телейлĕ пурнăçа пирĕнне
Туртса илме вăл куç хывать.
Хĕç тирĕнтер тăшман пырне!
Çапăçăва! Çапăçăва!

Тăшман мала шав тăрăнать,
Вутпа цŭлер фашист çулне.
Çĕртен, ĕçултен çунтар ăна, —
Туянтăр вăл хăй вилĕмне.

Тыт çиçĕпрех хĕçпăшала!
Таптама ан пар çĕршыва!
Çĕршывăмăн! Сталинăмăн! Мала!
Çапăçăва! Çапăçăва!

УЙАП МИШШИ.
Действующи Хĕрлĕ Çар.

МТС тракторсен паркне пĕтĕмпех юсаса çитернĕ

ЭЛĔК, ноябрĕн 3-мĕш. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 24 çул тултарни çинчен тунă докладпа унăн Хĕрлĕ Çар парадĕнче туса каланă историллĕ сăмахĕ пĕтĕм совет халăхĕн тăшмана çĕнтерес шанчăкне çирĕплетсе, ĕçри хастарлăхне темиçе хут та ытларах хавхалантарчĕç. Производствăллă çĕкленĕве совет ĕçсыннисем Сталинла Конституци кунне кĕтсе илнĕ май татах та ытларах ŭстерчĕç.

Элĕк МТС-чи рабочисем Сталинла Конституци кунне производствăра пысăк çитĕнŭсем тунипе кĕтсе илчĕç. МТС тракторсем ремонтлас плана ытлашшипех пурнăçларĕ. План тăрăх кăçалхи çул пурĕ те 8 трактор анчах юсама палăртса хунă пулсан, МТС рабочийĕсем тракторсен паркне (24 трактор) пĕтĕмпех юсаса çитернĕ. Рабочисем отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче кашни трактор тăшманăн хаяр хĕçпăшал пулса тăнине асрах тытаççĕ. Халĕ МТС-ра юсав мар трактор ĕçре те çук. Тракторсене юсас тата яланах йĕркеллĕ тытас тĕлĕшпе Майоровпа Родионов юлташсем уйрăмăнах тăрăшса ĕçлеççĕ.

Сталин юлташ докладĕпе парадра каланă сăмахне тĕплĕн сŭтсе-явнă трактористсемпе машиноведсем хушшинче те халиччен пулман производствăллă çĕкленŭ пачĕ. Вĕсем хăйсен нормисене темиçе хут ытларах ŭстерсе пурнăçлаççĕ.

МТС ĕçлекен колхозсенче пуринче те халĕ уборка ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. План тăрăх кăçал МТС-ăн 8.500 тонна ăван çапмалла пулнă. Паянхи куна МТС 7 пин тонна ытларах çапнă. Авăна пур колхозсенче те тенĕ пекех машинăсемпе çапаççĕ. Механиксемпе машинистсем тăрăшнине пула молотилкăсем пурте пĕр чарăнмасăрах ĕçлеççĕ.

Машинистсемпе трактористсем хушшинче социализмлă ăмăрту пырать. Тракторист Семенов ноябрьти плана 260 процент, П. Гусев — 150 процент, А. Митрофанов — 131 процент тултарнă. Машиноведсем: И. Сергеев, В. Никифоров, Н. Яковлев, С. Алексеев тата ытти сем те хăйсен планĕсене 150 процентран пусласа 200 процент таран тултараççĕ.

Уборка вăхăтĕнче комбайнерсем стахановла ĕçленĕ. Сăмахран, комбайнерка Мария Николаева, ВКП(б) членĕ, тырпул пухса кĕртес плана 480 процент, комбайнер Е. Матвеев — 345 процент, Ф. Лукина — 250 процент тултарнă. Çапах та кăçал МТС комбайнсемпе çителĕксĕр усă курнă теммелле. Чи хĕрŭллĕ вăхăтра чылай комбайнсем ĕçсĕрех ларнă. Вĕсенчен нумайĕшĕсем юсавлă мар. Комбайнсемпе ĕçлеме çĕнĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе МТС-ра халĕ те нимĕн те тунă çук. Кăçалхи çулăн çитменлĕхĕсене асра тытса, МТС-ăн килес çула валли комбайнерсем хатĕрлеме халех тытăнмалла.

И. ТУКТАШ.

МАЛАШНЕ ТАТАХ ТА ЛАЙĂХРАХ ĔÇЛЕМЕ ПУЛАТПĂР

Кăçал эпир Сталинла Конституци кунне пачах урăхла вăхăтра, отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра палла туса хăваратпăр. Юнлă Гитлер мирлĕ çĕршыв çине ăна чуралăха кĕртес шутпа ултавлăн килсе тапăнчĕ. Çав вăрă-хурахсем пирĕн телее, пирĕн ирĕклĕхе, ĕçлăхăмăн пуянлăхне, Сталинла Конституцине çирĕплетсе пынă мĕнпур тивĕçлĕхсене туртса илесшĕн. Анчах фашистсен ирсĕр ĕмĕчĕсем нихăçан та пурнăçланас çук.

Пĕтĕм совет халăхĕ Хĕрлĕ Çара пулăшать. Отечественнăй аслă вăрçăн фронтĕнче тыл хушшинче уйрăмлăх çук. Халĕ кашни колхозник, кашни колхозница тăшмана хăвăртрах тата йăлтах çĕмĕрсе тăкас шухăш-кăмăлпа ĕçлет. Вĕсем колхоз производствинче те, оборона ĕçĕнче те хăйсен ыксĕлми вăйне кăтартса параççĕ.

Эпир Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те туса парассишĕн тăрăшатпăр. Чи малтанах эпир государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене тултартăмăр.

Сталин юлташ ĕçсыннисене фронта пулăшассине вăйлатма чĕнсе каларĕ. Çулпуç чĕнсе калани çине пирĕн колхозниксем ĕçпе ответлеççĕ. Юлашки кунсенче Е. Кузьмин колхозник 1942 çулăн 13 килограмм, А. Захаров 32 килограмм аш-какай пачĕç. Çак кунсенчех ăван çапса пĕтеретпĕр. Ăван çапнă çĕрте машинăсемпе туллин усă курăççĕ.

В. КУЗЬМИН.
Шупашкар районĕнчи «Большая Волга» колхоз председателĕн заместителĕ.

Правăсемпе обязанноçсем туллин пурнăçа кĕрсе пыраççĕ

ÇĔРПУ, декабрĕн 4-мĕш. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Советсен Пĕтĕм Союзри Чрезвычайнăй VIII-мĕш Съезчĕ йышăннă Сталинла Конституци тăван çĕршывăн тĕп законĕ пулса тăчĕ.

Сталинла Конституци СССР гражданĕсене, рабочисемпе хресченсене ирĕклĕхпе телейлĕ пурнăç прависем панă. ССР Союзĕнчи мĕнпур граждансем сăмах, пичет, вĕренŭ, ĕçлев, кану, пулăшу тата ытти правăсемпе те усă курăççĕ.

Сталинла Конституци тивлечĕпе районри ĕçсыннисем, ССР Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрлех, пур правăсемпе те туллин усă курăççĕ. Предприятисенче, колхозсенче, учрежденисенче тата ытти организацисенче ĕçлесе, ĕçĕн хисеплĕпе пахалăхне кура ĕç укçи илеççĕ. Ватăлса е чирлесе ĕçлеме пултарайманнисене государство пулăшать. Ача-пăчасене пăхса ŭстерме государствăран пулăшу илекенсем сахал мар. Нумай ачаллă çемьесем 1936 çултан пуçласа паянхи куна çитиччен государствăран 1.936 пин тенкĕ пособи илнĕ. Çĕнĕ Салара кăна нумай ачаллă çемьесем государствăран 68 пин тенкĕ пособи илнĕ.

Сталинла Конституцин 121-мĕш статйине пурнăçа кĕртсе пынă май районра 5 вăтам шкул, 17 туллимар вăтам шкул тата 27 пуçламăш шкулсем ĕçлеççĕ. Вĕсенче 7.755 ача вĕренет.

Германи фашизмĕ пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăнчĕ. Вăл пирĕн Совет Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕх прависене, вĕренŭ, ĕçлев тата ытти правăсене тытса илсе, вĕсене ĕмĕрлĕх тарçă туса хурасшăн. Анчах фашистсен ирсĕр шухăшĕ пурнăçа кĕреймĕ. Пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çар тискер тăшмана çапса çĕмĕрĕ.

Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа чылай граждансем Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕç. Сталинла Конституцин 132-мĕш статйине числăн пурнăçлакан граждансен çемьисене государство кашни уйăхрах пособи парса тăрать. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа районра красноармеецсен çемьисене 448.480 тенкĕ пособи панă.

Сталинла Конституци тĕнчере чи демократиллĕ Конституци пулса тăрать. Вăл ССР Союзĕнчи граждансене национальноçпе рассине пăхмасăрах пĕртан право парать. Çавăнпа та ĕнтĕ Сталинла Конституци Совет Союзĕн граждансĕсене ырми-канми ĕçлесе унăн кĕрешме хавхалантарать.

Районри ĕçсыннисем отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра фронта пулăшас ĕçе кулленех вăйлатса пыраççĕ. Ĕç тухăçлăхне ŭстерес, тырпулсене пуçтарса кĕрес, государство умĕнчи обязательствăсене тултарас, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлесе парас ĕçсем Сталин юлташăн доклачĕпе сăмахне сŭтсе-явнă хыççăн уйрăмах вăйланчĕç. Районри колхозсем çак юлашки кунсенче 21 пин гектар лаптăк çинчен кĕлте турттарса капана хыврĕç, 20 пин гектар çинчен турттарнă кĕлтесене çапса пĕтерчĕç.

«Çĕнĕ пурнăç», «Цивильстрой», «Красный этновец», «Звезда» тата ытти колхозсем те кĕлтесене турттарса капана хывса лартрĕç. «Париж Коммуни», «Сталино», «Чуваш ЦИК» колхозсем Конституци кунне ăван çапса пĕтернипе кĕтсе илчĕç. Декабрĕн 1-мĕш тĕлне Пушарпуç, Йĕкĕрвар тата Шĕнер ялсовечĕсене кĕрекен колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем 1941 çулти укçа-тенкĕ парăмне пĕтĕмпех парса татрĕç. Районĕпе илсен, укçа-тенкĕ пухмалли çулталăк планне 93 процент, 4-мĕш квартал планне 71 процент тултарнă. Оборона фондне çирĕплетме 132.485 тенкĕ укçан, 17 пин тенкĕлĕх ытла заем облигацийĕсем, 100-шер центнер ялхуçалăх продукчĕсем, 2422 тир, 1140 килограмм çăм, 226 мулаххай, 500 мăшăр çаматă, 159 фуфайка тата ытти япаласем те пухса панă. Районри комисси пухнă япаласенчен чылайăшне боецсем валли ярса панă.

Çак кунсенче «Вучах» колхоз оборона фондне 1789 тенкĕ, «Совет» колхоз 1359 тенкĕ пачĕç. Районри ĕçсыннисем фронта пулăшас ĕçе вăйлатсах пыраççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Çамрăксем ĕçлев правипе туллин усă курăççĕ

Çитмĕн пурнăç пирки, ĕлĕк ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисене пĕчĕкренех ĕçле асаплантарнă. Çитменнине тата вĕсем хăлсемшĕн мар, çынсемшĕн ĕçленĕ. 14—15 çулти ачасем пуянсем патĕнче тарçăра пурăннă. Унта вĕсем хĕлĕн-çăвĕн ĕçлесе те тăранмалăх тупайман.

Капитализмла çĕршывсенче халĕ те çарах, пурнăç питĕ йывăр. Çулсерен темиçе пин çын выçăпа вилет. Ĕçсĕр антăранипе нумайĕшĕ хăйсене хăйсем вĕлереççĕ. Безработица капитализмла çĕршывсенчи ĕçсыннисене тŭсме çук асаплантарать.

Халĕ пирĕн Совет Союзĕнче пурнăç йăлтах урăхла. Советсен Пĕтĕм Союзри Чрезвычайнăй VIII-мĕш съезчĕ Сталинла Конституцие çирĕплетрĕ. Сталинла Конституци совет гражданĕсене пысăк правăсем панă. Вĕсенчен пĕри—ĕçлев правипе пулса тăрать. Ĕçлев правипе — социализмла тăван çĕршывăн чаплă та никам пăсмалла мар закон, кашни ĕçлеме пултаракан гражданина обязанноçĕ тата тивĕçĕ. Çитменлĕх тата лайăхрах тăвăçĕ. Пирĕн халь ĕç «кам ĕçлемест, çав çимест» принциппа пулса пырать. Çавăнпа çамрăксем пĕчĕкренех ĕçе вĕренеççĕ, хастарлă ĕçлеме тăрăшаççĕ. Вĕсем Сталинла Конституцире кăтартнă ĕçлев правине туллин усă курăççĕ.

Акă, Сыбайкасси ялсоветĕнчи «Труд» колхозри рядовой колхозник-комсомолец Евдоким Чернов кăçал 234 ĕçкунĕ тунă. Халĕ колхозри çамрăксем ытти колхозниксемпе пĕрле кунĕн-çĕрĕн ăван çапаççĕ. Чернов юлташ унта нормăна 2—3 хут ирттерсе тултарать. Çав колхозри комсомолец Алексей Александров та кăçал 211 ĕçкунĕ тума ĕлкĕрнĕ. «Клевер» колхозри çамрăксем те колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ. Комсомолец А. Жирнов юлташ 216 ĕçкунĕ тунă.

Колхоз çамрăкĕсем хăйсен йышлă ĕçкунĕсем çине пысăк тухăçлă тырпул, пуян тупăш илеççĕ.

Н. РУСАНОВ.
ВЛКСМ Ишлей райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çара кайнă арçынсем вырăнне хĕрсем ĕçлеççĕ. **Укерчĕк çинче: К. А. Малышева** юлташ. Вăл спирт заводĕнчи ликер цехĕнче мастер пулса ĕçлет, Хĕрлĕ Çара кайнă В. Н. Чепонис юлташ вырăнне тăлă.

ЯСТРЖЕМБСКИЙ фотоŭкерчĕнĕ.

Сталинла Конституци ялавĕпе, малалла!

Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайнăй VIII-мĕш съезчĕ 1936 çулти декабрĕн 5-мĕшĕнче Социализмлă Совет Республикисен Союзĕн çĕнĕ Конституцине йышăннă.

Сталинла Конституци ялавĕ айĕнче пирĕн нумай нацийĕн совет халăхĕ пĕтĕçсе тăрать. Çав Конституцире пирĕн çĕршыв большевиксен партийĕ, халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пынипе тунă пысăк çĕнтерŭсене, социализм çĕнтернине çырса хунă. Конституци пирĕн çĕршывра хуçалăхлă тата политикăллă пурнăçăн çирĕп никĕсĕ — социализм пулса тăнине, пирĕн çĕршывра эксплоататорла классем çуккине, безработица çуккине кăтартса парать.

ССР Союзĕн экономикин тĕп никĕсĕ социализмлă система пулса тăрать: производство хатĕрĕсемпе средствисене уйрăм çынсем хăйсен аллинче тытса тăрассине, çынна çын эксплоатацилессине пĕтернĕ; Совет Союзĕнче пĕтĕм власть ĕçсыннин депутачĕсен Советĕсем урлă хуласемпе ялсенчи ĕçсыннисен аллинче тăрать.

Сталинла Конституци — тĕнчери чи демократиллĕ Конституци. Унта пур халăхсен те пĕртан правăсем пуррине, хĕрарăмсем пĕртан правăллине, кашни гражданинăн ĕçлеме, канма, вĕренме, ватăлсан пулăшу илме тăма правăсем пуррине çырса хунă.

Россия халăхсен тĕрми пулнă. Патша Российинче пурăнакан халăхсем пусмăрлăхра пулнă, вĕсен нимĕнле право та пулман. Вĕсене патша правительстви хăйсен шкулĕсемпе, тăван чĕлхипе, пичетпе усă курма право паман, патша сучĕсенче пусмăрти халăхсемшĕн тăван чĕлхепе калаçса суд тума ирĕк паман. Патша правительстви тĕрлĕ халăхсене пĕр-пĕринчен уйрăм усрама тăрăшнă, вĕсене пĕр-пĕринпе хирĕçтернĕ, пĕр-пĕрин çине хĕтĕртсе ярса вĕлерттернĕ.

Царизм вăхăтĕнче чăваш халăхĕн нимĕнле право та пулман. Вăл хурлăх, мăшкăл тŭссе, пусмăрта пурăннă. Чăваш республикинче революциччен пĕр пысăк предприяти те пулман. Сталинла пятилетка çулĕсем хушшинче пирĕн республикăра пысăк предприятисем чылай тунă, ялхуçалăхне коллективизациленĕ, унта пысăк машинăсемпе ĕçлеççĕ, халăх хушшинчен учительсем, врачсем, агрономсем тата ытти специалистсем вĕрентсе хатĕрленĕ, чăваш халăхĕн хăйĕн тăван чĕлхипе кĕнекесем, хаçат-журналсем тухса тăраççĕ.

Сталинла Конституци пилĕк çул тултарнă вăхăтра пирĕн совет халăхĕ хаяр тăшмана, нимĕç империалисчĕсене хирĕç кĕрешет. Нимĕç империалисчĕсем Европăри халăхсене пусмăра чикрĕç, вĕсене демократиллĕ ирĕклĕхсемсĕр, правăсемсĕр тăратса хăварчĕç, вĕсене хăйсен чурисем туса хучĕç. Сталин юлташ Гитлерăн «çĕнĕ йĕрки» çинчен ак мĕн каларĕ: «Тĕрĕссипе илсен, гитлерла режим царизм вăхăтĕнче Российăра пулнă реакциллĕ режимăн ŭкерчĕкĕ пулса тăрать. Паллă ĕнтĕ, патша режимĕ рабочисен прависене, интеллигенцин прависене тата халăхсен прависене таптанă пекех, гитлеровецсем те вăл правăсене çине тăрсах таптаççĕ, патша режимĕ еврейсене хирĕç погромсем тунă пекех, гитлеровецсем те çине тăрсах еврейсене хирĕç вăтам ĕмĕрсенчи пек погромсем тăваççĕ. **Гитлерла парти демократиллĕ ирĕклĕхсен тăшманĕсем партийĕ, вăтам ĕмĕрсенчи реакцин тата черносотенла погромсен партийĕ пулса тăрать».** Фашизм вăл Германи империализмĕн чи реакциллĕ, чи шовинизмла, чи вăрă-хурахла элеменчĕсен партийĕ пулса тăрать. Германире влаçа хăйсен аллине çавăрса илнĕ пуçкасансен пĕчĕк ушкăнĕ шултра капиталистсемпе помещиксен ирĕкне пăхăнса тăрать. Анчах фашистсем: Гитлер влаçа хăйĕн аллине илнĕ хыççăн Германи государствине класлă государство мар, унта классене пĕтериĕ, тесе суяççĕ. Тĕрĕссипе, фашизм ĕçсыннисене хирĕç, пуринчен ытла рабочи класа хирĕç террор тăвакансен банди пулса тăрать. Фашизм рабочи класăн усçăн ĕçлекен организацийĕсене, профсоюзсене, рабочисен кооперацине, политикăллă партисене пурне те пĕтерсе хучĕ. Капиталистсем фабрикăсемпе заводсенче никама пăхăнман хуçасем пулса тăчĕç.

Фашистла Германи — рабочисемшĕн тамăк. Унта рабочисене ниçтинчен те ытла эксплоатацилеççĕ. Рабочисемпе хресченсене çĕршер пинĕн вĕлерсе пĕтереççĕ, темиçе миллион çынна тĕрмесенче, концентрационнăй лагерьсенче тытса усраççĕ.

Нимĕç империалисчĕсемпе вĕсен фашистла çынвĕлеренĕсем Совет Союзĕ çине вăрçăпа тухса, совет çĕршывĕнчи халăхсене чуралăха кĕртсе ŭкерме, нимĕç князĕсемпе баронĕсен чурисем тума, вĕлерсе пĕтерме хапсăнаççĕ. Çынвĕлерен Гитлер хăйĕн йыткĕтĕвĕсене пирĕн çĕршыв çине кĕртсе ярса, кĕске вăхăт хушшинчех Совет Союзне пĕтерсе лартма ĕмĕт тытнă. Унăн ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕреймерĕç. «Çиçĕм пек хăвăрт вăрçă» тăвассинче Гитлерăн ĕç тухмарĕ. Фашистсен йыткĕтĕвĕсене хирĕç пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот паттăрăн кĕрешеççĕ. Пирĕн пĕтĕм çĕршыв отечественнăй вăрçă туса пыракан пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăчĕ. Совет халăхĕ Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнчи хăйĕн ырă пурнăçне вăйлăн хŭтĕлет, Конституцие çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырса, хăйĕн таса тăван çĕршывĕн вăй-хăватне тĕреклетет.

Вăрçă кунĕсенче совет халăхĕ хăйĕн правительствин тавра, Ленин — Сталин партийĕ тавра татах та тачă пĕрлешрĕ. ССР Союзĕн кашни гражданинĕ Сталинла Конституцире çырса хунă хăйĕн обязанноçĕсене чыслăн пурнăçа кĕртсе, пирĕн çарпа флот валли çар хатĕрĕсем ытларах та ытларах парса тăма, тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме тăрăшать.

Сталин юлташ Октябрь уявĕ кунĕсенче пирĕн çарпа пирĕн флота хамăрăн пĕтĕм çĕршыв енчен ĕçлĕн тата активлăн пулăшма чĕнни çине ответлесе, пирĕн Чăваш республикинчи ĕçсыннисем те производствăра тимлĕн ĕçлесе пыраççĕ. Предприятисенче ĕç нормисене икшер-виçшер хут тултарса ĕçлекенсем йышлансах пыраççĕ.

Çулпуç чĕнни çине ответлесе, колхоз хресченĕсем хăйсен обязательствисене тултарма васкаççĕ. Пирĕн республикăра государствăна тырă 200 колхоз, аш-какай 600 колхоз, сĕт 700 колхоз срокченех парса татнă.

Чăваш республикинчи ĕçсыннисем оборона фондне 3 миллиона яхăн укçа, 681 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хыврĕç, 15560 пăт тырă, 2430 пăт аш-какай, 161 пăт çăм тата ытти сем те пачĕç. Ĕçсыннисем тăван çĕршыва сыхлакансене ăшă тумлантарас тесе тăрăшаççĕ. Республикипе 585 кĕрĕк пухса панă, 55 пин ытла сурăх тирĕ пухăннă, вĕсенчен халлĕхе 2022 кĕрĕк çĕленĕ. Çăм 33 пин килограмм пухăннă, унтан 7.728 мăшăр çаматă йăвалаççĕ, 2641 мăшăр çаматă хатĕрри пухăннă. 14799 мăшăр алтиш, 10 пин мăшăр ытла чăлха, 10 пин ытла çĕлĕк пухăннă.

Сталинла Конституци Совет Союзĕн граждансĕсене пурне те аслă правăсем тата халиччен пулман демократиллĕ ирĕклĕхсем панипе пĕрлех, вĕсем çине обязанноçсем те хурать. Вăл обязанноçсем çаксем: Конституцие çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырасси, ĕç дисциплинине пăхăнасси, тŭрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлесси, общество умĕнчи обязанноçсене чыслăн ĕçе кĕртесси, социализмлă харпăрлăха сыхласси, ăна тĕреклетме социализмлă тăван çĕршыва пурнăçа шеллемесĕр сыхласси.

Чăваш АССР Конституцийĕн 100-мĕш статйинче çырнă: «Тăван çĕршыва сыхласси — Чăваш АССР кашни гражданинĕн чи таса тивĕçĕ», тенĕ. Çак обязанноçа кашниннех чыслăн пурнăçа кĕртме тăрăшмалла. Çар ĕçне вĕренмелле. Оборонăн Государственный Комитечĕ ССР Союзĕн хĕçпăшал тытма пултаракан граждансене пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси çинчен, СССР правительстви пур граждансене те ПВХО ĕçне вĕрентесси çинчен кăларнă постановленисене çине тăрса пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Сталин юлташ Октябрь уявĕн кунĕсенче пирĕн совет халăхĕ умне, промышленноçпа ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе большевикла хастарлăхпа ĕçлесе пырас пулать.

Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем Ленин—Сталин партийĕ тавра тачăрах та тачăрах пĕрлешсе пырса, тăван çĕршывăн вăй-хăватне ŭстерсе, мĕнпур вăйсене тăшмана çĕнтерес ĕçе парса, тăван çĕршыва тăшман çарĕсенчен тасатĕç, нимĕç империалисчĕсемпе вĕсен çарĕсене çапса аркатĕç, нимĕç оккупанчĕсене пĕр çын юлмичченех пĕтерсе тăкăç. Совет халăхĕ хăйĕн аслă миссине — гитлерла Германин пусмăрĕ айне кĕрсе ŭкнĕ халăхсене ирĕке кăларас миссине ĕçе кĕртĕ.

З. АНДРЕЕВА,
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВĂРÇА ФРОНЧĔСЕНЧЕН КИЛНĔ ЮЛАШКИ ХЫПАРСЕМ

Пирĕн кăнтăр фронтĕнчи чăсĕм тăшмана хăваласçĕ

КАНТĂР ФРОНЧĔ, декабрĕн 2-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Лопатин чăсĕсем наступлени туса пыраççĕ. Хăшпĕр участокссенче противник танксемпе та. та пехотăпа контратакăсем тăрать. Ĕнер кăнтăрла иртсен Лопатин чăсĕсем халăх пурăнакан чылай пункчене тата высотасене йышăнса илнĕ. Каçхине те наступленки чарăнман. Колосовăн групписем противника çĕрĕпех малалла хăпаланă, ирхине халăх пурăнакан Б. пункчĕ патне тухнă.

Харитонов тата Ремизов командирсен чăсĕсем противника малалла ăнăçлăн хăваласа пыраççĕ. Совет Союзĕн Геройĕ Шепетов чăсĕнчи подразделенисенчен пĕри ĕнер противникăн пехоти ларса пыракан 20 машинăна пĕтерсе тăкнă, трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вĕсен хушшинче 21 оруди, 3 танк та. та снарядсемпе, патронсемпе, машинăсемпе тултарнă боеприпассем икĕ склачĕ. Çĕрле Харитонов чăсĕсем наступлени тунă, паян ирхине вĕсем халăх пурăнакан вунă пункта ытла йышăннă.

Ремизов чăсĕсем ĕнер В. тата П. пункчĕсене фашистсенчен тасатнă.

Противникăн çухатăвĕсемпе трофейисене шутласа палăртаççĕ. Малтанхи даннăйсем тата тыткăна лекнисем кăтартса панă тăрăх, Ростов патĕнче Хĕрлĕ Çар тăшмана питех те хăватлăн пырса çапнă. Тăшманăн малти чăсĕсем кăна мар, Клейст группин тылĕ те хĕвеланăçнелле чакать.

А. МАЛИБАШЕВ.

Пирĕн чăсĕсем çирĕппĕн тăраççĕ

КАНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, декабрĕн 2-мĕш. (**«Правда» спецкорĕ**). Тăшман, çухатусене пăхмасăрах, малалла — Е. пункчĕ патнелле талпăнать. Икĕ кун каярах нимĕçсем çапăçăва танксем, артиллери тата минометсем нумай сĕртрĕç. Пирĕн чаплă кавалеристсем, Шутов командирăн стрелковăй чăсĕсемпе таччăн çыхăнса тăрса, фашистсене тылран тата флангран пырса çапрĕç. Çак çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 700 ытла тăран, 15 танк, 8 бронемашина, 25 мотоцикл, 40 автомашина тата 2 оруди пĕтрĕç. Ĕнер тăшман каллех малалла талпăнса пăхрĕ, анчах пирĕн паттăр боецсем, хирĕçле атака туса, ăна ку тапхăрта та тытса чарчĕç. Икĕ енчен те кунĕпех артиллерирен хирехирĕç хĕрÿллĕн персе тăчĕç.

Фронтăн çак участокĕнчи Ч. хулин районĕнче тăракан тăшманăн чăсĕсем лăпкă мар. Пирĕн чăсĕсем тăшмана ерипен, анчах та малаллах кĕссе пыраççĕ, унăн плацĕнче тăракан пĕчĕк гарнизонĕсене пĕтере пĕтере тăкаççĕ. Нимĕçсем хăйсен вилнĕ офицерĕсемпе салтакĕсене процессисем туса пытараççĕ. А. ялăнче çавăн пек 30 процесси туса ирттернĕ. Пирĕн кĕçĕн лейтенант Пономаренко, пĕр çавăн пек процессие курнă та, вилнисене пытарма пухăннă нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене хăйсене те вилнисемпе пĕрлех пытарма шутланă. Çак шухăшпа вăл хăйпе пĕрле 6 боеца илнĕ те, систерми шăвăнса пырса, нимĕçсем тăракан яла çитсе кĕнĕ. Процессие пухăннă нимĕçсен ушкăнĕ çине сасартăк пеме тытăннă. Çавăнтах 25 нимĕçе çити персе ÿкернĕ.

Тăшмана окопсенчен хăваласа кăларaççĕ

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, декабрĕн 3-мĕш. (ТАСС). Бондарев юлташăн подразделенийĕ А. тата Г. пунктсенче тăшмана малалла кĕссе пырать. Ноябрь уйăхĕн юлашки 10 кунĕ хушшинче тăшмана пайтах пысăк сиен кÿнĕ. Унăнне 20 оруди, 25 миномет, 12 станковăй пулемет, 5 ручной пулемет, 15 автомат, икĕ миномет, темĕн чухлĕ патронсем тата ытти çар хатĕрĕсем те нумай пĕтерсе тăкнă.

Ку районра тытăна лекнĕ нимĕç салтакĕсенчен пĕри, 22-мĕш пехотнăй полкри Франц Блехнер салтак каласа панă тăрăх, Бондарев юлташăн подразделенийĕ активлăн çапăçнине пула нимĕç войскисен питех те пысăк çухатусем пулнă. 22-мĕш пехотнăй полкăн 5-мĕш ротинчи салтаксенчен 8 кун хушшинче 60 процент вилсе пĕтнĕ. Темиçе офицер, ку шутран рота командирĕ те, сиплĕ. Çав полкăн ытти ротисенче вилнисен хисепĕ татах та пысăкрах. Ку районра кĕрешнĕ парашютнăй дивизин хăшпĕр подразделенийĕсене пĕтĕмĕшпех тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. Чĕррĕн 8—9 салтак кăна тăрса юлнă ротăсем те пур.

П. тата Т. пунктсен районĕнче противник Федюнинский юлташăн подразделенийĕсене хирĕç контратакăсем тума хăтланса пăхрĕ, анчах унăн контратакисем ăнăçлă пулмарĕç. Пирĕн войскăсем, пур контратакăсене те сире-сире çырса, нимĕçсене хăйсене вăйлăн пырса çапрĕç. Икĕ эрне хушши хăюррăн çапăçса, пирĕн войскăсем тăнманăнпе 8 танк, 14 оруди, 29 станковăй пулемет, икĕ радиостанци, темĕн чухлĕ винтовкăсемпе патронсем тытса илнĕ.

Декабрĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Гульман юлташ подразделенийĕн аслă сержант Баландин юлташ ертсе пыракан боецĕсем тăшманăн окопĕсене çĕмĕрсе кĕрсе çирĕпленсе ларма задани илчĕç. Ку задачăна пурнăçлама пятех те пысăк хăюлăхпа харсăрлăх кирлĕ пулнă. Тăшман окопĕсем патне уçă вырăнпа кăна пыма май пулнă. Нимĕçсем окопсем умне йĕплĕ пралукăсем çарса тултарнă. Çаксене пула вĕсем пирĕн войскăсем çине пĕр татти-сыпнисĕрех пулеметсемпе пăшалсенчен вăйлăн персе тăма пултарнă.

Пирĕн сапĕрсем, кĕрĕн политрук Колесников юлташ ертсе пынине, çĕрле йĕплĕ пралук картасем патне шăвăнса çитрĕç. Фашистсем вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, вĕсем йĕплĕ пралуксене касса тата-тата хемăр войскăсем валли çул уçса хучĕç. Тăшман çапăçу хирне пĕр чарăнмасăрах ракетăсем ярса çутатса тăчĕ. Пирĕн группăна курсан, фашистсем питĕ вăйлăн пеме тытăнчĕç. Пирĕн боецсем, снарядсем ÿкнипе пулнă шăтăксене çеç пытанкаласа, пурĕ-пĕр малаллах шăвăнса пычĕç. Вĕсем, хăйсен пурнăçне те кĕрхенмесĕр, тăшман окопĕсем патнех сывхарса çитрĕç. Çак самантра группа командирĕ Баландин юлташ аманчĕ. Группăна командир пулса ертсе пыма сержант Авдюхин хăй çине илчĕ. Тăшман вут-хĕмĕ сайăнчех вăл хăйĕн группине проходсем хушшипе илсе кĕрсе кайрĕ. Тăшман окопĕсем патне çитесси 40—50 метр кăна тăрса юлчĕ. Пирĕн боецсем харсăррăн малалла ыткăнчĕç те—тăшмансем, паттăр боецсем хĕснине тÿсеймесĕр, хăйсен окопĕсенчен тухса тарса, хыçарахри траншейăсене кайса пытанчĕç. Кайран фашистсем пирĕн харсăр боецсене хăйсенчен тытса илнĕ окопсенчен хĕссе кăларас тесе темиçе хутчен те тапăнса пăхрĕç, анчах вăл тапăнусем пĕри те ăнăçлă пулмарĕç.

Ленинградран пĕлтереççĕ

Киров юлташ ячĕпе тăракан, виçĕ хут орден илнĕ завод коллективĕ Кăнтăр фронтĕнчи чăсĕсем чаплă çĕнтерÿ туни çинчен пĕлтерекен хыпара çавтери пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕ. Заводăн пур цехĕсенче те нумай çынсемлĕ митингсем пулса иртрĕç. Çав митингсенче Совет Информбюровăн пĕлтерÿне тата Сталин юлташ сăмахне вуласа панă. Хĕрлĕ Çăран паттăр боецĕсене саламласа урра! кăшкăрни темĕн вăхăтчен пĕр чарăнмасăр янраса тăчĕ. Кировецсем Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи войскăсен главнокомандующийĕ, Совет Союзĕн маршалĕ Тимошенко юлташа кăнтăр фронтĕн командующийĕ генерал-полковник Черевиченко юлташ патне телеграмма ячĕç. Телеграммăра çапла каланă: «Нимĕç захватчикĕсене тăван çĕршывран хăваласа кăларас ĕçре питех те пысăк çĕнтерÿ тунă кăнтăр фронтĕнчи чăсĕсем чаплă çĕнтерÿ туни çинчен пĕлтерекен хыпара çавтери пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕ. Заводăн пур цехĕсенче те нумай çынсемлĕ митингсем пулса иртрĕç. Çав митингсенче Совет Информбюровăн пĕлтерÿне тата Сталин юлташ сăмахне вуласа панă. Хĕрлĕ Çăран паттăр боецĕсене саламласа урра! кăшкăрни темĕн вăхăтчен пĕр чарăнмасăр янраса тăчĕ. Кировецсем Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи войскăсен главнокомандующийĕ, Совет Союзĕн маршалĕ Тимошенко юлташа кăнтăр фронтĕн командующийĕ генерал-полковник Черевиченко юлташ патне телеграмма ячĕç. Телеграммăра çапла каланă: «Нимĕç захватчикĕсене тăван çĕршывран хăваласа кăларас ĕçре питех те пысăк çĕнтерÿ тунă кăнтăр фронтĕнчи чăсĕсем чаплă çĕнтерÿ туни çинчен пĕлтерекен хыпара çавтери пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕ. Заводăн пур цехĕсенче те нумай çынсемлĕ митингсем пулса иртрĕç. Çав митингсенче Совет Информбюровăн пĕлтерÿне тата Сталин юлташ сăмахне вуласа панă. Хĕрлĕ Çăран паттăр боецĕсене саламласа урра! кăшкăрни темĕн вăхăтчен пĕр чарăнмасăр янраса тăчĕ. Кировецсем Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи войскăсен главнокомандующийĕ, Совет Союзĕн маршалĕ Тимошенко юлташа кăнтăр фронтĕн командующийĕ генерал-полковник Черевиченко юлташ патне телеграмма ячĕç. Телеграммăра çапла каланă: «Нимĕç захватчикĕсене тăван çĕршывран хăваласа кăларас ĕçре

Сывă пултăр Кăнтăр фронтĕнчи боецсем, командирсем тата политработниксем!

Сывă пултăр пирĕн Сталин!».

(ТАСС).



ВĔРЕНÛ ПРАВИ ЛАЙĂХ ВĔРЕНМЕ ХУШАТЬ

Октябрьти революциччен Российăра аслă шкулсем мĕнпурĕ те 91 пулнă, вĕсенче 112 пин студент вĕреннĕ пулсан, халь вĕсен шучĕ 800 çитнĕ, унта 600 пин студент вĕренет. Унăр пуçне 3.700 техникумра 800 пин çын квалификацияллĕ специалистсем пулса тухма хатĕрленеççĕ.

Халĕ пирĕн Чăваш республикинче те 3 аслă шкул, 16 техникум, вăтам, тулăлимар вăтам шкулсем, унăр пуçне шоферсем, машиноведсем, бухгалтерсем тата ытти специалистсем хатĕрлекен тĕрлĕрен курссем нумай ĕçлеççĕ.

Шкулсенче студентсене харпăрхăй тĕллĕн ĕçлеме пур условисене те туса панă. Вĕсем хăйсен вĕренĕвне практикăлла ĕçпе çыхăнтарма пултараççĕ. Кирлĕ условисене туса панă хыççăн, тăван çĕршыв студентсенчен тивĕçлине ыйтать. Вăл отлично вĕреннĕ, хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен специалистсем пулса тухма хушать. Тăван çĕршыва культурăллă, квалификацияллĕ, дисциплинăллă, Ленинпа Сталин ĕçĕсене чĕререн парăннă специалистсем кирлĕ.

Чăваш республикинчи ялхуçалăх институтĕнчи студентсем çĕршыв ыйтнине пурнăçлама тăрăшаççĕ. Ытти шкулсенчи пекех, институтра студентсен йышĕ çулсерен ÿсет. Çавăнпа пĕрлех вĕренÿ пахалăхĕ те лайăхланать. Студентсем ялхуçалăхĕнчи чăн-чăн специалистсем пулса тухма пĕтĕм вăя хурса вĕренеççĕ. Уйрăм группăсем вĕренÿре пысăк ÿсĕмсем тунă. Сăмахран, агрономсен факультечĕн III-мĕш курсĕнче «хорошо» тата «отлично» паллăсем 89 процент, IV-мĕш курсра (çав факультетах) — 86 процент шутланаççĕ. Маросин, Дмитриева, Цветков тата ытти студентсем те вĕренÿ çине тимлĕн пăхаççĕ, лайăх вĕренеççĕ, тивĕçлипе «хорошо» та «отлично» паллăсем илеççĕ. Арзамасов студент сталинла стипенди илме тивĕçлĕ пулчĕ. Вĕсем Шигильчевпа иккĕшĕ вĕреннĕ вăхăтрах Чăваш республикинче çĕнĕ культура—соя акса тума май тупас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Институтри студентсем, группăсемпе курссем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайнă. Унăр пуçне, вĕренÿ пахалăхне хăпартас тĕлĕшпе СССР Совнаркомĕ вĕреннĕшĕн укçа тÿлемелли çинчен кăларнă постановлени те чылай пулăшрĕ.

Л. МИХАЙЛОВ.
Чăваш ялхуçалăх институтĕн студенчĕ.

КОЛХОЗНИКСЕН ĔÇРИ ХАСТАРЛĂХĔ

ЕТĔРНЕ. Кĕçĕн Чутайри Тельман ячĕпе тăракан колхозра Сталин юлташăн докладне сÿтсе-явнă чухне колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт вĕçлеме обязательство илнĕччĕ. Çав обязательствăна вĕсем пурнăçа кĕртрĕç ĕнтĕ. Çак кунсенче колхоз, ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе, ĕçкунĕсем тăрăх тулăшсене валеçсе пама тытăнчĕ.

Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхозри пиллĕкмĕш бригада ялхуçалăхĕн мĕнпур ĕçĕсене вĕçлерĕ. Ирсеви «Комбайн» колхозра Сталин юлташ докладне сÿтсе-явнă хыççăн ĕç тухăçлăхĕ темиçе хут ÿсрĕ. Çак кунсенче клевер çапса, çитес çул валли вăрлăх хатĕрлесе хучĕ.

Сталин юлташ чĕнсе каланине районри колхозсем хăйсен государство умĕнчи парăмĕсене срокчен парса татнине ответлеççĕ. Стрелецкри Буденный ячĕпе тăракан, Козлозкăри «Восток», Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхозсем хăйсен государство умĕнчи мĕнпур обязательствисене чыслăн тултарчĕç.

Фронта пулăшасси, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухасси колхозсенче кунран-кун вăйланса пырать. Мăн-Шемертенри «Заветы Ленина» колхозра Сталин юлташăн докладне сÿтсе-явнă хыççăн колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 18 мăшăр чăлха, 18 мăшăр алшăш, 20 килограмм çăм, 125 метр пăр, 10 мулаххай, 10 мăшăр çăматă панă. Л. Николаев колхозник пĕр тир, тепĕр мулаххай, З. Самойлова колхозница пĕр мулаххай панă. Засурскинчи «Красноармеец» колхозри колхозниксем 80 килограмм çăм, 50 килограмм пыл, Талуйĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем оборона фондне пĕр тонна ашкакай, 3 сурăх, 1 ĕне, 50 килограмм кăмпа панă.

Колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче «Комсомол Чăвашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухас ĕç те анлăн сарăлса пырать; çав ĕçе валли «Комбайн» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем 1200 тенкĕ, Мичурин ячĕпе тăракан колхоза—670 тенкĕ укçа пухнă.

Н. ЦВЕТКОВ,
И. ЛЬВОВ.

Артель заказсене вăхăтра пурнăçлать

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Красный инвалид» промартель ĕçне паха тĕслĕхсем кăтартать. Ноябрĕн юлашки кунĕсенче çулталăкри производство программине 110 процент тултарчĕ.

Артелĕн тĕп ĕçĕ йывăçран каскаласа хуçалăхра кирлĕ япаласем тăвасси. Çак çулта катка-пичкесем, корзинкăсем, партăсем, сĕтел-пукансем, шкафсем, урапасем тата ытти япаласем те нумай туса сутнă. Промышленноспа усă курма 3700 вĕрен явнă. Ку ĕçе куçăр çынсем ĕçленĕ. Вĕсене мастер Радиков юлташ лайăх ертсе пырать.

Артель хăйĕн пĕтĕм ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетсе, вăрçă вăхăтĕнче кирлĕ япаласем тума пуçларĕ. Вăл çĕнĕ производствăсем — тир тăвакан, çĕвĕ çĕлекен, атă-пушмаксем çĕлекен тата ытти те уçнă. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем çĕлеме 858 тир тунă. Тир тунă çĕрте ватă старик Г. Мухин, В. Спиродонов тата А. Васильев юлташсем стахановла ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленех нормăна 250—300-шер процент тултарса, уйăхсерен 360 тенкĕрен пуçласа 400 тенкĕ таран ĕçлесе илеççĕ. Тир тăвакансем Г. Дионисовпа С. Игнатьев юлташсем те нормăна 150—200-шер процент тултараççĕ. Тунă тирсенчен артельри çĕвĕ çĕлекен мастерскойра боецсем валли ăшă тумтирсем çĕлеççĕ. Пурĕ 74 кĕрĕк пиншак, 50 мăшăр алса тулĕ çĕленĕ. Çĕвĕ çĕленĕ çĕрте Портнов, Ильин, Шорников тата ытти юлташсем те нормăна кулленех 150—200-шер процент тултараççĕ.

Артельре политикăлла-массăллă ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Ку енĕпе артелĕн бухгалтерĕ комсомолец Н. Александров юлташ тăрăшса ĕçлет. Вăл кашни кунах политинформаци туса ирттерет. Сталин юлташ докладне вуласа сÿтсе-явнă хыççăн артельре производствăллă çĕнĕ çĕкленÿ пуçланчĕ.

Халĕ артелĕн хăшпĕр членĕсем йĕлтĕр тума вăрман касаççĕ, хăма çураççĕ. Вăрман каснă çĕрте артель правленин председателĕ хастарлă старик Н. Смирнов юлташ хăй те ывăнма пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлет.

В. ВИКТОРОВ.



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Сурçĕр-хĕвеланăç енĕ).

Нимĕç фашисчĕсен бандисене хирĕç пыракан хаяр кĕрешÿсенче командирсемпе политработниксен çĕнĕ кадрĕсем ÿсеççĕ. Н-ски ротăри политрук заместительне В. Ранцана рота политрукĕ тунă.

Унерчĕн çиниче: политрук В. Ранца боецсене «Правда» хаçатри статьяна вуласа парать.

Б. УТКИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Ĕçсыннисен производствăри активлăхне татах та ытларах çĕклер

ÇЕМЕРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри партактивăн çак кунсенче пулса иртнĕ пухăвĕнче Сталин юлташăн Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладĕнчен тата Хĕрлĕ Çар парадĕнче каланă сăмахĕнчен тухса тăракан задачăсене пурнăçа кĕртесси çинчен сÿтсе-явнĕç. Çак ыйту тăрăх ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Вахнин юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик хăйĕн сăмахĕнче хальхи обстановкăна çутатса парса, фронта пулăшса пырассине вăйлатма, пĕтĕм ĕçе Сталин юлташ кăтартнă пек туса пыма чĕнчĕ. Вăл аслă çулпуçăн Октябрь уявĕн кунĕсенче тухса каланă сăмахĕсем ĕçсыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхне ÿстернине палăртрĕ. Предприятисенче стахановла движени сарăлса пырать. Кашни рабочипе работница, колхозник-пе колхозница лайăхрах ĕçлесе, тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас шухăш-кăмăлпа пурăнать.

Древкомбинатри стахановец-двухсотниксем Бунин, Краснощеков, Романов, Тараканов юлташсем кашни кун хăйсен ĕç нормисене 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ. Столяр юлташ ватă пулин те (вăл 67 çулта) пĕр браксăр, простой тумасăр ĕçлесе, кулленех виçшер норма тултарать. Çавăн пек стахановецсем комбинатра кăна 250 çын ытла шутланаççĕ.

Производство планне тултарас, ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе Ширшов ячĕпе тăракан промартель, апат-çимĕç комбиначĕ, механически арман, çăкăр пĕçерекен коллективсем те начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте вунă уйăх программине ытлашшипех тултарнă. Ширшов ячĕпе тăракан артельри стахановецсем Ратникова, Бахмачева юлташсем хăйсен нормисене икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Сталин юлташ фронта пулăшса пырассине вăйлатма чĕнсе калани çине колхозниксем те ĕçри хăвăртлăхсене ÿстернине, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçланине ответлеççĕ. Чылай колхозсем тырпул, аш-какай, сĕт-çу т. ыт. ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана срокченех тултарнă. Сăмахран, «Путь Ленина», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене ытлашшипех пурнăçланă.

Районри ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе начар мар хутшăнчĕç. Ку тарничен районĕпе темиçе çĕршер мăшăр çăматăсем, пиншаксем, алшăш-носкисем тата ытти япаласем нумай панă. Кунсăр пуçне тата районри ĕçсыннисем оборона фондне кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕçукçине хывса пыраççĕ,—паянхи куна 230 пин тенкĕ ытла укçа тата темиçе çĕршер пăт тырă, пахчаçимĕçсем, аш-какай, сĕт-çу панă.

Ĕçре парти активĕпе коммунистсем пример кăтартаççĕ. Вĕсем чăн малтан хăйсем ĕçе хутшăнса, массăна организацилесе пыраççĕ. Сăмахран, механизациленĕ вăрманпункчĕн начальникĕ коммунист Клячкин тата партбюро секретарĕ Борисов юлташсем кашниех Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем 4—5 япала панă. Ку енĕпе вĕсем участоксенче ятарласах пухусем, калаçусем ирттернĕ. Çавăнпа та кунта ĕçлекенсем хушшинче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем паманни пĕр çын та çук, кашни рабочи пĕрремикшер япала панă.

Ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе «Большевик» завод директорĕ коммунист Шустин, партбюро секретарĕ Миронов юлташсем те пример кăтартаççĕ. Вĕсем боецсем валли 4—5-шер ăшă япала панă.

Анчах çапах та фронта пулăшас тĕлĕшпе тунă ĕçсене çителĕклĕ теме çук. Уйрăм участоксенче ĕç хăвăртлăхĕсем çителĕклĕ мар. Районра хальхи вăхăтра плана тултарса пырайман предприятисем те пур. Уйрăм колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе кая юлса пыраççĕ. Çапла сăмахран, «Красноармеец», «Лесной огонек», «Красный Октябрь» колхозсенче аван çапас ĕçе пĕтĕмпе те 34—57 процент çеç пурнăçланă. Паянхи куна районра пахча-çимĕçсем парас, çĕрулми типĕтес ĕçсем те юлса пыраççĕ.

Машинно-тракторнăй станци те чылай ĕçсемпе юлса пырать. Вăл уйрăмах аван çапас тĕлĕшпе янăх ĕçлет. Çакă вăл чăн малтанах МТС руководителĕсем (директор Петров юлташ) хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтĕ хушшă пек урăхлатса çĕнетменнинчен, çавăрăнăçусăр ĕçленинчен килет.

Парти активĕн пухăвĕнче пĕтĕмпе 13 çын тухса каларĕ. Пурте вĕсем хальхи вăхăтра рабочисемпе колхозниксем хушшинче патриотизмла çĕкленÿ татах та çĕнĕ вăй илсе пыни çинчен тата ĕçри хăшпĕр çитменлĕхсем çинчен чăрăнса тăчĕç. Районри военком Рожковский юлташ çар ĕçне вĕренес ыйту мĕнле пыни çинчен каласа пачĕ. Вăл калана тăрăх çар ĕçне вĕренес ĕç юлашки вăхăтра чылай лайăхланнă, занятисем организованно иртеççĕ. Всевобуч боецĕсем пурте тенĕ пекех хăйсене валли винтовка макечĕсем тунă. Çав вăхăтрах уйрăм подразделенисенче çитменлĕхсем те палăраççĕ-ха.

Парти активĕн районри пухăвĕ ĕçри çитменлĕхсене кĕске вăхăт хушшинчех пĕтерме, аслă çулпуç Сталин юлташ панă кăтартусене тÿррĕн пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе практикăллă ĕçсем тума палăртса резолюци йышăнчĕ.

Семинар туса ирттерчĕç

ПЕРВОМАЙСКОЕ. ВКП(б) райкомĕпе ВЛКСМ райкомĕ районри колхозсенчи тата шкулсенчи комсомол организаци секретарĕсен, шкулсенчи пионер вожатăйĕсен семинарне ирттерчĕç. Семинарта Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Октябрьти революци 24 çул тултарни çинчен тунă доклада сÿтсе-явнă. Семинар комсомол организацийĕсен секретарĕсемпĕн питĕ усăллă пулни палăрчĕ. ВЛКСМ райкомĕпе ВКП(б) райкомĕ çакăн пек семинарсене малашне те тăтăшах ирттерме пулчĕç.

Ал. ТУКМАКОВ.

Парткабинет çак кунсенче

ÇЕРПУ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕ Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă историллĕ доклада тата Хĕрлĕ Çар парадĕнче каланă сăмаха ĕçсыннисем патне çитерес тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем турĕ. Ялсенчи агитколлективсен ĕçне лайăхлатма пулăшрĕ. Сталин юлташăн докладĕнчĕпе сăмахĕн текстĕсене илсенех агитколлектив руководителĕсене пухса тивĕçлĕ кăтартусем, инструкцисем панă. Унта çак историллĕ докладпа сăмаха кашни ĕçсынни патне çитерсе пурнăçа кĕртесси çинчен каласа ăнлантарнă. Кун хыççăн предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче тата килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче Сталин юлташăн докладĕнчĕпе сăмахне ăнлантарса парасси анлăн пуçланчĕ.

ВКП(б) райкомĕпе пĕрле районри учительсене, врачсене тата ялсовет исполкомĕсемпе колхоз председателĕсене пухса канашлусем туса ирттернĕ. Çав канашлусенче Сталин юлташ кăтартинсене пурнăçа кĕртес майпа ялхуçалăх ĕçĕсене пуçтарса çитерес ĕçе, государство умĕнчи парăмсене халех парса татас ĕçе, Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшса тăрас ĕçе татах та ытларах вăйлатасси çинчен сÿтсе-явнă.

Парткабинет çумĕнче лекторсен группине организациленĕ. Группăра 15 çын. Октябрьти Социализмлă Аслă революци 24 çул тултарни çинчен 18 ялсоветри колхозсенче лекцисемпе калаçусем туса ирттернĕ. Ноябрь уйăхĕнче парткабинет пÿлĕмĕнче «1812 çулти отечественнăй вăрçă», «Фашизм—ССР Союзĕнчи халăхсен тата мĕнпур тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсен хаяр тăшманĕ», «Виçĕ аслă державăсен фашизма хирĕçле коалицийĕ» темăсемпе лекцисем ирттернĕ. Лекцисенче 70—100-шер çын пулнă.

Парткабинет çак кунсенче большевикла агитацине пропагандăна вăйлăн сараканн пункт пулса тăчĕ. Кунта агитаторсем тĕрлĕ ыйтусемпе консультаци илме тата хăйсен политикăллă пĕлÿлĕхне хăпартас енĕпе харпăрхăй тĕллĕн ĕçлекен çынсем кĕнекесем илме килеççĕ. Вĕсем кирек хăш вăхăтра та кунта кирлĕ ответсем илме пултараççĕ, хаçат-журналсем, кĕнекесем вуласçĕ.

ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕ отечественнăй вăрçă кунĕсенче ĕçе урăхлатса çĕнетрĕ. Ĕçсыннисем хушшинче агитацияллĕ-массăллă ĕçе анлăн сарса пырас тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем тăва-

Сталин юлташ лартнă задачăсене хăвăрт пурнăçа кĕртсе пырар!

Çулпуçăн сăмахĕсене ăнлантарса параççĕ

ЕЛЧĔК. Сталин юлташăн историллĕ сăмахĕсене ноябрĕн 7-мĕшĕнче радио тăрăх районра 2100 çын итлерĕç. Каярах, Сталин юлташăн докладĕ тата унăн Хĕрлĕ Çар парадĕнче калана сăмахĕ хаçатсенче пичетленсе тухнă хыççăн, ВКП(б) райкомĕ çав паха сăмахсене ĕççыннисене ăнлантарса парас ĕçе лайăх организацилерĕ. Ноябрĕн 11-мĕшĕнче агитколлектив руководителĕсемпе лекторсен семинарне ирттернĕ. Семинарта пурĕ 32 çын пулнă. Çакăнпа пĕрлех ялсенчи агитколлективсен семинарĕсене туса ирттернĕ. Çав семинарсенче халăх хушшинче ĕçлекен агитаторсем пурĕ 460 çын пулнă. Унта агитаторсем Сталин юлташăн докладне тĕплĕн вĕреннĕ, çулпуçăн çĕнтерӳ çулне кăтартса паракан сăмахĕсене кулленхи ĕçре пурнăçа кĕртсе пымалли мероприятисене палăртнă.

Ноябрĕн 11—20-мĕш кунĕсенче районти колхозсенче пухусем пулса иртрĕç. ВКП(б) райкомĕ уйăрнă докладсем тата вырăнти агитаторсем пурĕ 440 доклад тата калаçусем туса ирттернĕ. Вăл докладсемпе калаçусенче пурĕ 6200 çын пулнă. Хальхи вăхăтра Сталин юлташăн сăмахне ăнлантарса парасси колхоз бригадисенче, уйрăм килсенче пырать.

Сталин юлташăн историллĕ кăтартăвĕсене халăха ăнлантарса парас ĕçе малтанхи кунсенчех практикăллă ыйтусемпе сыхăнтарнă. Сталин юлташăн хĕрӳллĕ сăмахĕсем колхозниксен, колхозницăсен, пĕтĕм ĕççыннисен чĕрисене тăшмана çĕнтерес шанчăк кӳчĕç, вĕсене çĕнтерӳ тума, нимĕç оккупантĕсене пĕр çын юлми пĕтерсе тăкиччен Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшса тăма хавхалантарчĕç. Колхозсенче ĕç тухăçлăхĕ кунран кун ӳссе пырать.

«Осоавиахим» колхоз, Сталин юлташăн докладне итленĕ хыççăн тепĕр куннех, кĕлте кӳме тата авăн çапма хĕрӳллĕн тытăнчĕ. «Коммунар» колхоз ноябрĕн 14-мĕшĕнче хĕрлĕ обоз организацилесе государствăна 100 центнер çĕрулми лесрĕ, аш-какай, сĕт-çу пачĕ; кунта талăкĕпех авăн çапма тытăнчĕç. Киров ячĕпе тăракан колхозра Акулина Львова, Мария Петрова, Михаил Лапшин, Анна Антонова колхозницăсем, Сталин юлташăн докладне итленĕ хыççăн çав кунах, государство умĕнчи парăмсене парса пĕ